

# *Чăваш наци библиотеки:* 150 çул культурăпа çут ĕç анинче



Чăваш Республикин наци библиотеки кăçал, кăрлач уйăхĕн 21-мĕшĕнче, 150 çул тултарчĕ. Библиотека паян – çĕнĕ информаци технологийĕсемпе пуянланнă ятарлă уйрăмсен, кĕнеке управĕн, тĕрлĕ тĕлпулусем, конференцисем ирттермелли залсен комплексĕ. Вăл пичет кăларăмĕсене упракан учреждениреn хальхи вăхăтри информаци центрĕ пулса тăчĕ.

Унăн историйĕ питĕ пуян. 1871 çулта Шупашкар хули Хусан кĕпĕрнинчи 12 уес хули хушшинче халăх усă курмалли библиотека уçăлнă пĕрремĕш хула пулса тăнă. 1870 çул вĕçĕнче тĕрлĕ чинлă интеллигентсен 7 çынран тăракан ушкăнĕ Хусан губернаторĕ патне библиотека уçас тĕллевпе ятарлă çыру янă. Часах вĕсен ыйтăвне килĕшӳллĕ татса панă.

1871 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче библиотекăна пуçаракансен пĕрремĕш пухăвĕ иртнĕ. Унта библиотекăна ертсе пырас ыйтăва сӳтсе явнă, библиотекăна йĕркелекенсемпе уйрăм çынсем хаçат-журналсемпе кĕнекесем илме çырăннă. Çак кун Шупашкарти халăх библиотеки йĕркеленнĕ кун шутланать. Малтанах библиотека фондĕнче 80 кĕнекепе журнал çеç пулнă, вулакансен шучĕ – 25 çын.

Малтанхи библиотекарь тата библиотекăна пуçаракансенчен пĕри хулари прихут училищин вĕрентекенĕ Константин Яковлевич Михайлов пулнă. «Библиотека туса, эпĕ халăхăн пулас ырлăхне туйнă», – тесе çырнă вăл хăйĕн аса илĕвĕнче.

Тĕрлĕ çулсенче библиотекăна тытса пырас тата укçа-тенкĕ енчен пулăшас ĕçе хулари интеллигенцин паллă тата ĕçлĕ çыннисем хутшăннă. Вĕсен хушшинче: Рафаил Заленскипе Семен Вишневский врачсем, «Арçури» баллада авторĕ Михаил Федоров учитель, Федор Дрябловпа Прокопий Ефремов купсасем тата ыттисем те.

Библиотека чи малтанах демократи йĕркипе ĕçленĕ: унăн устав, хăй тытăмлăх органĕсем пулнă /правлени, ревизи комиссийĕ/, тăтăшах учредительсемпе вулакансен собранийĕсем иртнĕ, мĕнле хаçат-журнал çырăнса илесси пирки канашланă.

1889 çулта библиотека çумĕнче вулав залĕ уçăлнă, унта кунсерен 7-8 çын пырса çӳренĕ. Библиотека ертӳçине правлени пĕр çуллăха суйланă, вăл тӳлевсĕр ĕçленĕ. Çак йĕркепе библиотека 20 çул ĕçленĕ. 1892 çулта халăх библиотекине «хулари обществăллă библиотека» тесе ят панă, хула управи ун валли çулталăкра 50-шар тенкĕ уйăрса пама пуçланă. Çакă вара библиотекаре кăштах шалу укçи тӳлесе тăма май панă.



Библиотека фондĕнче «Шупашкарти халăх /обществăллă/ библиотеки» ятпа пĕрремĕш кĕнекесен коллекцийĕ упранса юлнă. Унта 1815 çултан пуçласа 1917 çулччен тĕрлĕ темăпа пичетленсе тухнă кĕнекесем. Пурĕ 300 кĕнеке, ку вăл революцичченхи фондчĕн 3% шутланать.

1920 çулта Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕ май, чăвашсем хăйсен нацине аталантарма тата наци ăнланулăхне ӳстерме, унпа пĕрлех этносăн хăйне евĕрлĕхне те упраса хăварма хастар хутшăннă. 1920-1930 çулсенче чăвашсен профессиллĕ театрпа музыка искусстви, кино искусстви, чăваш литератури аталанма пуçланă. Аслă пĕлӳ паракан икĕ заведенийĕпе тĕпчев институчĕсем уçăлнă. Кунсăр пуçне Чăваш патшалăх издательстви йĕркеленнĕ – пĕрремĕш çулĕсенчех вĕрентӳ кĕнекисем, обществăллă политика темипе çырнă литература, вырăс тата тĕнче классикĕсен чăвашла куçарнă кĕнекисене пичетлесе кăларнă.

1919 çулта библиотека Шупашкар уесĕн тĕп библиотеки пулса тăнă. Кун хыççăн библиотека уес вĕрентӳ пайĕнчен тата Хусан кĕпернинчи тĕп библиотекăран кĕнекесем, брошюрăсем, хаçатсем, плакатсем илсе тăма пуçланă. Библиотека штачĕ 8 çынна çитнĕ, çакă вара вулакансемшĕн ирхи 9 сехетрен пуçласа каçхи 9 сехетчен ĕçлеме май панă. Çакăн пек йĕркепе, хăш-пĕр улшăнусене шута илмесĕр, библиотека 90 çул ытла ĕçленĕ.

1920-1930 çулсенче библиотекăн тавра пĕлӳпе наци фончĕн никĕсĕ хывăнса юлнă. Унта Чăваш патшалăх кĕнеке издательствинче пичетленсе тухнă вĕрентӳ кĕнекисем, чăвашла тата вырăсла пичетленсе тухакан хаçат-журналсем кĕнĕ. Вĕсен хушшинче: «Канаш», «Трудовая газета», «Сунтал», «Капкăн», «Ĕç хĕрарăмĕ», «Халăха вĕрентес ĕç», «Хатĕр пул», «Трактор» тата ыттисем те.

Шупашкар библиотеки культура вучахĕ пулса тăрать. Библиотека активĕ кĕнекесене пропагандăлать, халăх хушшинче хаçат-журнал çырăнтарассине сарать, «кĕнеке тусĕсен обществисене» йĕркелет, çитĕннĕ çынсене хута вĕрентет.

1925 çулта библиотекăна патшалăх бюджечĕ çине илеççĕ, çав çулсенчех М.Горький ятне параççĕ.

1939-1945 çулсенче литература туянса тăма библиотекăна кашни çул 50-шар 70-шер пин тенкĕ уйăрса пама пуçлаççĕ. Библиотека фончĕ Мускаври наука библиотекинчен ятарлă кĕнеке экземплярĕ тата Чăваш кĕнеке издательствинче тухакан кашни кĕнекенех илсе тăма пуçлать. Çак çулсенче библиотекăсен хушшинче кĕнекесем улăштарасине йĕркелекен пай, библиографипе методикăллă пулăшу парса тăра-

кан пайсем ĕçлеме пуçланă. Республикăри библиотека районти тата ялти библиотекăсене методикăллă пулăшу парса тăрассине йăлана кĕртнĕ.

Чăваш республикин М. Горький ячĕллĕ библиотеки Чувашская урамĕнчи 6-мĕш çуртра, Федор Ефремов купсан çуртĕнче вырнаçнă пулнă (халĕ – К. Иванов урамĕ(.

Вăрçă вăхăтĕнче вулавăш пӳлĕмĕн çуррине партин хула агитпункчĕ йышăннă. Библиотека хут, укçа-тенкĕ, çурта хутса ăшăтмалли топливо çитменнине пăхмасăрах ĕçленĕ. Библиотекарьсем те çителĕксĕр пулнă – вулакансен ыйтăвĕсене 10 çын тивĕçтернĕ, кунсăр пуçне вĕсем госпитальсемпе çар чаçĕсене кĕнекесемпе тухса çӳренĕ, художествăллă пултарулăх кружокĕсене хутшăннă, фашистсем аркатнă библиотекăсем валли кĕнекесем пуçтарнă. Вăрçă вăхăтĕнчи лару-тăрăва пăхмасăрах, библиотекăра фронтпа тылри паттăрлăхĕ çинчен калакан тĕрлĕ мероприятисем ирттернĕ, куравсем йĕркеленĕ.

Библиотекăна çав йывăр вăхăтра Августа Федоровна Сергеева, каярах Ольга Николаева Григорьева ертсе пынă. Вĕсем ниме пăхмасăр библиотекăн тĕп пайĕсене – библиографи, кĕнеке паракан тата кĕнекесене хатĕрлекен /обработка/ пай, вулав залне, ятарлă фонда, бухгалтерие, хуçалăх пайне тата кĕнекесем юсакан мастерскойне – упраса хăварма пултарнă.

Куравра вăрçă вăхăтĕнче пичетленсе тухнă кĕнекесене вырнаçтарнă. Вĕсем ытти кĕнекесенчен уйрăлса тăраççĕ. Вăл вăхăтра пичетленнĕ изданисен хуплашкисем çӳхе, хучĕ япăх пахалăхлă, хурапа шурă ӳкерчĕклĕ, страницисем çулсем иртнĕçемĕн сарăхнă тата патракланнă. Апла пулсан та, Аслă Аттеллĕх вăрçă вăхăтĕнчи кĕнекесен пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк.

Чăваш патшалăх издательстви вăрçă çулĕсенче пурĕ 850 тĕрлĕ кĕнеке пичетлесе кăларнă. Вĕсем пурте библиотека фондĕнче типтерлĕн упранаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче пичетленнĕ кĕнекесемпе хаçат-журнала библиотека ĕçченĕсем пурне те электронлă версисене куçарнă. Вĕсемпе вулакансен библиотека сайтĕнче паллашма май пур.

1948-1976 çулсенче Раççей пулăшу комитечĕ урлă библиотекăна гуманитари пулăшăвĕ майĕпе 70 кĕнеке килнĕ. Кĕнекисем çинче «Совет Союзĕн паттăр халăхне Америка гражданĕсенчен» тесе çырнă. АПШ /США/ правительстви пуçарăвĕпе Америка çыннисем хăйсен чи лайăх та паха кĕнекисене пирĕн çĕршыва ярса панă. Çак кĕнекесем Чăваш республикинчи М.Горький ячĕпе хисепленсе тăракан библиотекăна Рудомино ячĕллĕ Пĕтĕм Раççейри ют чĕлхе литературин патшалăх библиотеки урлă çитнĕ. Çакна палăртса хăвармалла: Америкăран килнĕ кĕнекесем çинче ют чĕлхе литературин пайĕн фончĕ никĕсленнĕ.

1956-1965 çулсен хушшинче республикăри промышленноç предприятийĕсем халăха кирлĕ таварсем кăларма пуçланă, çĕнĕ производствăна алла илнĕ. Шупашкарти трактор валли хатĕрсем тăвакан, тимĕр-бетон япаласем хатĕрлекен заводсен, «Чувашкабель», «Химтекстильмаш», керамика блокĕсем тăвакан завочĕсен, пир-авăр комбиначĕн пĕрремĕш цехĕсем хута кайнă. Çĕнĕ тĕллевсене пурнăçлама çĕнĕ пĕлӳсем кирлĕ пулнă, техника облаçĕнчи малта пыракансен опычĕпе паллашни пысăк вырăн йышăннă. 1961 çулта библиотекăна пирĕн çĕршывра шутласа кăларнă изобретенисене çырса кăтартнисем килме пуçланă. Вăхăт иртсен вĕсем патентпа техника пайĕн фондĕнче вырăн тупнă.

Çак çулсенче вĕренӳ заведенийĕсен преподавателĕсемпе студенчĕсем, республикăри предприятисенчи рабочисемпе инженерсем библиотекăна йышлăн çӳреме пуçланă. Ку вăхăталла библиотекăра ӳнер литературин, ял хуçалăх литературин пайĕсем, наци литературипе таврапĕлӳ тата ют чĕлхепе çырнă литература пайĕсем уçăлнă. Çут ĕçне анлăлатма библиотека таврапĕлӳ енĕпе хатĕрленĕ методикăпа библиографи материалĕсем пулăшнă. Вĕсенчен хăшне-пĕрне асăнса хăварар:

«Чăваш çыравçисен хайлавĕсене сарасси», «Чăваш АССРĕнчи промышленноçра малта пыракансен опычĕ», «Чăваш АССРĕнчи ял хуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕ», «И.Я. Яковлев – чăваш халăхне çутта кăлараканĕ» т. ыт. те.

1972 çулта библиотека Ленин проспектĕнче вырнаçнă çĕнĕ çурта куçнă. Ку çурта библиотека 100 çул тултарнă тĕле тунă. Унта кунсерен 14 пайра 500-шер вулакана йышăнма май пулнă. Библиотекăна тавра пĕлӳпе чăваш литературине упрамалли функцине шанса панă, ĕçре библиографи классификаципе усă курма пуçланă, килсе тăракан çĕнĕ кĕнекесене шута илессине автоматизациленĕ.

Библиотека ял хуçалăхра ĕçлекен специалистсене çĕнĕ информаципе лайăх тивĕçтерекеннисенчен пĕри шутланнă. Унăн ĕçченĕсем ял хуçалăхра малта пыракансен опытне телевидени передачисем урлă сарнă, информаци списокĕсем хатĕрленĕ.

1991 çулта тĕп библиотекăна «Республикăри М. Горький ячĕллĕ универсаллă наука библиотеки» теме йышăннă. Çак тапхăрта унти ĕçĕ-хĕлĕ компьютер çине куçма пуçланă, çавна май ятарлă компьютерсем тата специализациленĕ программăсем туяннă.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 1994 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн М.Горький ячĕллĕ библиотека Чăваш Республикин Наци библиотеки пулса тăрать. Наци библиотекин статусне илнĕ май, библиотекăн тĕллевĕсем те анлăланаççĕ: ретроспективлă наци библиографине хатĕрлесси; наци пичечĕн репертуарне пухасси; наци информаци системине йĕркелесе ярасси; тавра пĕлĕвĕн пĕтĕмĕшле каталогне туса хурасси; республикăри библиотекăсене наци литературипе ĕçленĕ чух пулăшу парасси; библиографипе методика кăтартăвĕсем туса хатĕрлесси; ытти тăрăхсенче пурăнакан чăвашсемпе культура çыхăнăвĕсене çирĕплетесси; республика тулашĕнчи библиотекăсене чăваш кĕнеке издательствинче тухакан кĕнекесемпе тивĕçтересси т.ыт.те. Çакă вара библиотекăна çĕнетсе улăштарма хистенĕ: аталантармалли концепци туса хатĕрленĕ, сайра тĕл пулакан кĕнекесен тата документсене консервацилекен центрне, «Чăваш кĕнеки» тата право информацийĕн усă центрĕсене, маркетингпа çĕнĕлĕхсен пайне уçнă. Чăваш Республикин наци библиотеки тӳррĕн пулăшнипе республикăри ялти вулавăшсене çĕнетесси пулса пырать.

2006-2009 çулсенче библиотекăн тĕп çуртне реконструкциленĕ, 2011 çулта вара – хушма çурт туса пĕтернĕ. Библиотека çуртне çĕнетни библиотека ĕçне те çĕнĕлле йĕркелеме, ĕç мелĕсене улăштарма май пачĕ. Информаци технологийĕсемпе усă курмалли лапамсем пысăкланчĕç: право информацийĕн центрĕ, электронлă вулав залĕ, вĕренӳ центрĕ, халăха информацин çĕнĕ технологийĕсемпе усă курма вĕрентекен тренинг центрĕ, православи кĕнекин «Радонеж» центрĕ, Китай культура центрĕ, Казахсен культура центрĕ, «Интеллектуариум» ача-пăча пӳлĕмĕ, чăваш халăх поэчĕн Геннади Айхин залĕ ĕçлеме пуçларĕç. Çакă вара библиотекăра официаллă тĕлпулусене, пресс-конференцисене тата ытти тĕрлĕ мероприятисене кирлĕ шайра ирттерме май парать. Халĕ вулавăш çĕршыври чи пысăк библиотекăсемпе архивсен электронлă çăл куçĕсемпе тӳррĕнех усă курма пултарать.

2013 çулта библиотекăна Чăваш Республикин Патшалăх кĕнеке палатипе пĕрлештернĕ, унта упраннă 77367 документ библиотека фондне куçнă. Çапла вара, 2021 çулхи кăрлач уйăхĕ тĕлне библиотека фондĕнче 2 млн çурăна яхăн документ упранать, 108 чĕлхепе. Çав шутран 214 пине яхăн – тавра пĕлӳпе наци докуменчĕсем, вĕсенчен 61 пине яхăн экземпляр – чăвашла пичетленнисем. Вулакансем кашни çулах 900 пин кĕнеке-журналпа усă кураççĕ. Библиотека фондĕнче кĕнекесемпе хаçат-журналĕсемсĕр пуçне альбомсем, атлассем, промышленноç каталогĕсем, стандартсем, патентсем, картăсем, слайдсем, диафильмсем, микроафишă-

сем т.ыт.те упранаççĕ.

Библиотека фончĕпе усă курма Шупашкарта тата республикăра пурăнакан пур çитĕннĕ çын та пултарать. Республика тулашĕнче пурăнакансемшĕн те вулав залĕн алакĕсем яланах уçă.

Библиотека тĕрлĕ категориллĕ вулакансем валли информаципе библиографи материалĕсем хатĕрлесе кăларать: чăваш кĕнекисен пĕрлештернĕ каталогне, уйрăм çынсене халалланă, пĕр-пĕр отрасльпе, темăпа библиографи указателĕсем, мультимеди кăларăмĕсем хатĕрлет. Уйрăмах вулакансен хушшинче «Раççей историйĕнчи Чăвашсен паллă çыннисем» ярăмпа хатĕрленĕ электронлă кăларăмсем, «Чăваш литературипе критики», «Чăваш енри культура аталанăвĕ» библиографи указателĕсем сумлă.

2019 çулта библиотекăра Пĕтĕм Раççейри профессиллĕ икĕ пысăк мероприяти иртрĕ: Раççейри халăх усă куракан библиотекăсен «Библиокараван» 18-мĕш форумĕ тата «Библиотекăсенчи таврапĕлӳ ĕçĕ-хĕлĕн ыйтăвĕсем» ятлă Пĕтĕм Раççейри 20-мĕш наукăпа практика конференцийĕ.

Республика пурнăçĕнче библиотека йĕркелесе ирттерекен куравсемпе презентацисем, конференцисемпе литература каçĕсем, конкурссемпе фестивальсем, пысăк масштаблă культура акцийĕсем паллă вырăн йышăнаççĕ. Кашни çулах библиотекăра пине яхăн мероприяти иртет. Вĕсене 25 пине яхăн çын пырса курать.

Библиотекăра вулакансене кĕнеке памалли 16 ятарлă зал, мероприятисем ирттермелли 10 зал пур. Вулавăшри ĕç-хĕле «ИРБИС 64(32» библиотека программипе йĕркеленĕ. Çĕнĕ кĕнеке, хаçат-журнал килнине шута илесси, каталогсемпе ĕçлесси, вулакансене кĕнеке парасси, библиотека фондне шута илесси автоматизаци мелĕпе пулса пырать. Библиотекăра пурĕ 200 компьютер, вĕсенчен 75-шĕпе вулакансем хăйсем тĕллĕн усă курма пултараççĕ.

Библиотекăра упранакан кĕнекесене пурне те электронлă каталогра шута илнĕ. Унпа библиотека сайчĕ урлă усă курма пулать. Пичет материалĕсене электронлă формăна куçарма ятарлă техника туяннă. Электронлă библиотекăра вара пурĕ 40 пине яхăн документ.

Вулавăш пичет кăларăмĕсене упракан учрежденинчен çĕнĕ вăхăтри информаци центрĕ пулса тăчĕ. Çулсерен библиотекăна 170 пине яхăн çын пырать.

Чăваш Республикинчи наци библиотекин ĕçне пысăк шайпа хаклаççĕ. Сăмахран, 2020 çулта библиотека Аслă Çĕнтерӳ 75 çул çитнĕ май, халăхсене патриотла воспитани парас тата вăрçă ветеранĕсен социаллă хӳтлĕх ыйтăвĕсене татса парас ĕçсене пысăк тӳпе хывнăшăн Раççейĕн «Çĕнтерӳ» йĕркелӳ комитечĕн асăну медальне тивĕçнĕ. Документа Раççей Президенчĕ Владимир Путин алă пусса çирĕплетнĕ.

Çапла вара пĕчĕк пӳлĕмре йĕркеленнĕ библиотека паян кĕнекесене упрамалли çурт кăна мар, информаципе культура центрĕ те. Халĕ чернилпа хут вырăнне эпир клавиатурăпа, сканер-принтерсемпе усă куратпăр, карточкăсемлĕ каталог вырăнне – ятарлă программа. Çавах та вулавăшăн тĕп тĕллевĕ улшăнман – кĕнеке урлă çут ĕçпе культурăна сарасси. Паян вăл пурте усă курма пултаракан библиотека кăна мар, патшалăх шайĕнче кĕнеке упракан тĕп учреждени те, ăслăлăхпа тĕпчев ĕçĕсен центрĕ те. Çавăн пекех Чăваш Енри тата ун тулашĕнчи чăвашсемпе ĕçлекен библиотекăсен методика центрĕ те.

**Лилия БУЛАНКОВА, Роза СТЕПАНОВА.**